27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 Вус.

1945
ФЕВРАЛЬ
4
ВЫРСАРНИКУН
22(6773) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ
ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН,
ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН
ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧĔН
ХАÇАЧĔ

Туртăм вăйне çураки валли лайăх хатĕрлер

Фронтран куллен килсе тăракан савăнăçлă хыпарсем пирĕн колхозниксемпе колхозницăсене çуракине лайăхрах хатĕрленме хавхалантараççĕ. Колхозлă ял, фронт умĕнчи ответлăха туйса, хамăран паттăр Хĕрлĕ Çара вăйлăрах пулăшас кăмăлпа ывăнма пĕлмесĕр ĕçлет.

Халĕ ялта хĕрӳллĕ ĕç пырать. Колхозниксем, вăрлăхсене çителĕклĕ таран уйăрса, вĕсене сортлаççĕ, вĕсен пахалăхне тĕрĕслеççĕ, çуракинче кирлĕ машинăсемпе ялхуçалăх инвентарьне юсаççĕ. Иртнĕ уйăхра колхозниксемпе колхозницăсем уйăхире тинлĕк кăларас, вырăнти тĕрлĕ удобренисем пухас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлерĕç. Вăйлă тырпул туса илес ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăракан çав мероприятисене пирĕн малалла та лайăх пурнăçа кĕртсе пымалла. Колхозниксемпе колхозницăсен агротехника вĕренĕвне анлăн йĕркелемелле.

Çуракине ăнăçлăн иртерес ĕçре туртăм вăйĕ питĕ пысăк вырăн йышăнать. Çавăнпа та туртăм вăйне çураки валли хатĕрлесси тĕп ыйтусенчен пĕри пулса тăрать.

Паллах, иртнĕ çулхисем пекех, пирĕн колхозсен уйăрĕсенче тракторсем чылай пулаççĕ. Анчах çапах та çуракин ăнăçлăхне лаша татса парать.

Лашасене лайăх пăхса усракан, вĕсене çураки валли лайăх хатĕрлекен колхозсем пирĕн республикăра çĕршер шутланаçĕ. Вылăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана пур енĕпе те ăнăçлăн тултарассишĕн пынă 1944 çулхи социализмлă ăмăртура мала тухнăшăн Чăваш АССР Совнаркомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илнĕ Çĕрпӳ районĕнчи «Ĕмĕт» колхозра лашасене пăхас ĕçе кăтартулăн йĕркеленĕ. Лашасем кунта мăнтăр та вăйлă. Кашни лашашăн кам ответлă пулса тăнине витене кĕрсенех пĕлетĕн. Лаша витинче çирĕп йĕрке тунă. Апата перекетлĕн, зоотехник туса панă норма тăрăх, çитереççĕ. Лашасене пăхас, вĕсемпе усă курас ĕçри обезличкăна пĕтернĕ. Хăш лашапа камăн çӳремеллине кăтартса, ездовойсен аллине удостоверенисем панă. Çавăн пекех Ишлей районĕнчи «Большевик», «Пархикасси», Муркаш районĕнчи «Красное Сормово», Свердлов ячĕпе тăракан, Калинино районĕнчи «Броневик», Калинин ячĕпе тăракан, Октябрьски районри «Красный Октябрь», «Звезда», «КИМ» колхозсенче те лашасене лайăх пăхаççĕ. Çавăнпа лашасем йывăр ĕçре те начарланмаççĕ, вĕсен йышĕ ӳссех пырать. Çакăн пек колхозсене татах та вуншар илсе кăтартма пулать. Вĕсенче ССР Союзĕн Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕ «Колхозсемпе совхозсенче лашасен йышне ӳстермелли тата вĕсене пăхса усрас ĕçе лайăхлатмалли мерăсем çинчен» 1943 çулхи майăн 13-мĕшĕнче йышăннă постановление тĕрĕс пурнăçласа пыраççĕ.

Анчах чылай колхозсенче лашасен йышне ӳстересшĕн, вĕсене пăхас ĕçе лайăхлатассишĕн кирлĕ пек тăрăшмаççĕ, лашасем çине чунсăррăн, тискерле пăхаççĕ. Красноармейски районри «Большевик» колхозра иртнĕ çул Х. Иванов, ĕçре тĕрĕс усă курмасăр, икĕ лашана суранлатса халтан ярса вĕлернĕ. Комсомольски районри Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕ Морозов, лашапа ĕçе кайсан, ăна туяпа хĕнесе, суранлатса пĕтернĕ. Çакăн пек тискерле ĕçсем сахал, анчах вĕсем пĕр-пĕр колхозри пĕтĕм колхозниксен ятне пăсаççĕ, колхоз хуçалăхне, çапла вара пĕтĕм государствăна сиен кӳреççĕ.

Нумай колхозсенче туртăм вăйне çураки валли хатĕрлес тĕлĕшпе пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Первомайски районри «Пионер» колхозра паянхи кун тĕлне 12 лаша ĕçе юрăхсăр. Çав районри «Смычка» колхозра чирлĕ лашасем нумай. Хĕрлĕ Чутай районĕнчи «Новая жизнь» колхозра 15 лаша ĕçе юрăхсăр. Çав колхозрах чирлĕ 5 лашана, сыватас вырăнне, шăтăса пăснă. Тăвай районĕнчи «Красное Сормово» колхозра 16 лаша ĕçлеме пултараймаççĕ.

Елчĕк районĕнчи колхозсенче лашасене пăхса тухнă хыççăн мăнтăрисем пĕтĕмпе те 3,6 процент, вăтам ӳтлисем 30 процент кăна пурри палăрнă, ыттисен вара ырхан та вăйсăр. Вăл кăна та мар-ха, пăхса тухнисенчен 186 лаша суранлине тата вĕсене сыватас тĕлĕшпе нимĕн те тумалли палăртнă. Ырхан та суранлă лашасем нумай. 93 гектар çинче юр тытнă. Вырăнти удобренисене уя кăларас ĕçе тума уйăрăм колхозниксемпе лашасене çирĕплетнĕ. Вĕсем хăйсен нормине ытлашшипех тултарса пыраççĕ. Уйăрăмăнах С. Тимков бригадир. А. Кузьмина, Ф. Жукова, А. Пучков колхозниксем лайăх ĕçлеççĕ.

«КИМ», «Октябрь», «Комбайн», «Коммунист», Ленин тата Карл Маркс ячĕсемпе тăракан колхозсенче уйăрăмах нумай. Лашасене пăхассине, вĕсемпе усă курассине çав колхозсенче чăтма çук начар йĕркеленнĕ. Лашасемпе кам ăçта каяс тет, никамран ыйтмасăрах, çавăнта каять. Ахальтен мар ĕнтĕ Карл Маркс ячĕпе тăракан колхозра суранлă та чирлĕ лашасен йышĕ 25 процент, «Автогигант» колхозра 31,5 процент шутланать. Асĕннĕ колхозсенче ут таврашĕсене кашни лаша çумне çирĕплетмен. Мĕнле хăмăт е ĕнерчĕк лекет, çавна тытса кӳлеççĕ. «МОПР», «КИМ», «Журавлевка» колхозсенче вăйсăр лашасем нумай пулсан та, вĕсене канма тăратман. Çак районра кăçал та, иртнĕ çулхи пекех, чирлĕ лашасем пур. Анчах район тата колхоз руководительĕсем лашасемшĕн хăрушă чире пĕтерес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнмаççĕ.

Колхозăн шалти тата колхозниксен хуçалăхĕнчи ĕçсенче ытларах майракалла шултăра выльăхсемпе ĕçлемелле. Пирĕн республикăра иртнĕ çул вăкăрсемпе тата хĕсĕр ĕнесемпе чылай ĕçлерĕç. Пĕтĕмпе 6000 пуç кӳлсе çӳренĕ. Вăрмар районĕнче иртнĕ çул 432 вăкăрпа, Елчĕк районĕнче 464 вăкăрпа, Комсомольски районра 329 вăкăрпа ĕçленĕ. Анчах та çак паха пуçарăва кирлĕ пек йышăнса илмен районсем халĕ те пур-ха. Шăмăршă, Чкаловски, Первомайски, Пăрачкав районĕсем иртнĕ çул, туртăм вăйне çителĕксĕррине пула, ялхуçалăх ĕçĕсене кая юлса вĕçлерĕç. Туртăм вăйĕ енчен ĕç кунта кăçал та лайăх теме çук. Анчах Шăмăршă районĕнче вăкăрсене ĕçе вĕрентесси пурпĕрех çителĕксĕр пырать. Кунта пĕр çултан иртнĕ вăкăрсем 391 пуç, Первомайски районра 182 пуç, Октябрьски районра 671 пуç шутланаççĕ. Вĕсене ĕçе вĕрентес тĕлĕшпе питех те лайăх ĕçлеççĕ. Элĕк районĕнче ĕçе вĕрентнĕ вăкăрсем пурĕ те 91 пуç кăна, çав вăхăтрах кастарнă тата ĕçе вĕрентме май пур вăкăрсем 400 пуç ытла шутланаççĕ. Вăкăрсене ĕçе вĕрентесси—пысăк та пачах татса памалли ыйту. Кашни колхозăн ку тĕлĕшпе пикенерех ĕçлемелле. Кастарнă вăкăрсене тата хĕсĕр ĕнесене халех ĕçе вĕрентме тытăнмалла.

Çураки вăхăтĕ сывхăрса китет. Кашни колхоз руководителĕн туртăм вăйне çураки валли хатĕрлес тĕлĕшпе чăн-чăн хуçа пулса ĕçлемелле. Ырхан лашасене кантарма, лайăх апатлантарма тăратмалла. Чирлĕ е суранлă лашасене тимлĕн сиплесе сыватмалла. Ветеринарсемпе зоотехниксене чирлĕ лашасем пур колхозсем çумне çирĕплетмелле, лашасене сыватассишĕн вĕсем колхоз руководителĕсемпе пĕр танах ответлă пулса тăнине асăрхаттармалла.

Лашасем валли кирлĕ апата çителĕклĕ таран уйăрса, старши конюхсем аллине акт сырса памалла, кашни кун мĕнле апата чĕн чухлĕ çитермеллине палăртса, нормăсем çирĕплетмелле. Лаша апатне тирпейсĕр тыткалакансемпе вăрлакансене хирĕç çирĕппĕн кĕрешмелле. Çураки умĕн тата çураки вăхăтĕнче лашасене çитерме çителĕклĕ таран никам тĕкĕнмелле мар фонд уйăрса хумалла.

Лашасене уйăхсеренех тĕрĕслесе тухни пысăк мероприяти пулса тăрать. Çак ĕçе кашни районрах туса пымалла, ун тавра колхозниксен анлă массине явăçтармалла. Гĕрĕслекен комисси кăтартса хăварнă çитменлĕхсене кĕске вăхăтрах пĕтерсе пымалла.

Колхозсенче туртăм вăйĕн йышне ӳстерес шутпа майракалла шултăра выльăхсене, уйăрăмăнах кастарнă вăкăрсемпе хĕсĕр ĕнесене кӳлсе çӳреме вĕрентмелле. Ку ĕçре комсомолецсен колхозсене тивĕçлипе пулăшмалла.

Районсенчи парти, совет тата комсомол организацийĕсен туртăм вăйĕ çураки вăхăтĕнче мĕнле пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен, лаша çине чунсăррăн пăхакан çын колхоз умĕнче кăна мар, государство умĕнче те айăпа кĕни çинчен колхозниксене тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Конюхсемпе ездовойсем хушшинче килĕшӳлĕх пулмалла, вĕсем пурте лашасене юратса пăхма тивĕçлĕ. Çуракине мăнтăр та вăйлă лашасемпе кĕтсе илессишĕн кашни колхозрах социализмлă ăмăртăва анлăн сарса ямалла.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ФЕВРАЛĔН 2-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Февралĕн 2-мĕшĕнче пирĕн çарсем ХĔВЕЛТУХАÇ ПРУССИРЕ çаплах наступлени туса пынă, ДОМНАУ, ШИППЕНБАЙЛЬ, ГУТШТАДТ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата, тăшманпа çапăçса, халăх пурăнакан ытти 100 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ГЕРМАУ, РОМИТТЕН, ШЕНБРУХ, ЛАНГЕНДОРФ, ЛЯНДСКРОН, ЮДИТТЕН, ЛИСКЕН, ТРОМИТТЕН, РЕДДЕНАУ, ПЕТЕРСХАГЕН, ЗЮССЕНБЕРГ, ШТОЛЬЦХАГЕН, АЛЬТКИРХ, БАЙСВАЛЬДЕ, ЛАУТЕРВАЛЬДЕ ятлă пысăк ялсем.

ШНАЙДЕМЮЛЬ районĕнче пирĕн çарсем хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

ОДЕР çинчи ФРАНКФУРТ хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем ЗОЛЬДИН, ДРОССЕН хулисене çапăçса тытса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 150 пункта ытла йышăннă, вăл шутра—ШТАФФЕЛЬДЕ, АЛЬТ ЛИММРИТЦ, РАДАХ, МАЛЬСОВ, ВАЛЛЬВИТЦ ятлă пысăк ялсем.

ПОЗНАНЬ районĕнче пирĕн çарсем хулара хупăрласа илнĕ тăшман чаçĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă.

ЛЕШНО (ЛИССА) хулинчен хĕвеланăç нерехре пирĕн çарсем ОДЕР шывĕ çине тухнă, КОЛЬЦИГ, КОНТОПП, ЛИБЕНЦИГ, БОМАДЕЛЬ, ЦИРНИХ, ЛИППЕН ятлă пысăк ялсем туртса илнĕ.

БУДАПЕШТРА пирĕн çарсем хулан хĕвеланăç пайĕнче (БУДАРА) хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, 23 квартал тытса илнĕ.

Февралĕн 1-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 133 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшпи çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 26 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

Хĕвелтухăç Пруссире пирĕн çарсем çапах наступлени туса пынă. Унти çапăçусенче нимĕçсем йывăр çухатусем тӳссĕçĕ. Тăшманăн Хĕвелтухăç Пруссири группировки, Германин вăтăçĕрти районĕсенчен татăлса кайнăскер, халь йышăнса тăракан позицисене темле пулсан та хăй аллинчех тытса хăварма тăрăшать. Нимĕç офицерĕсемпе эсэсовецсен ятарласа тунă командисем нимĕçсен каялла чакакан салтакĕсене çавăнтах пере-пере пăрахаççĕ. Совет çарĕсем, тăшмана хăватлăн пыра-пыра çапса, нимĕçсен группировкине хупăрласа илнĕ унка хĕснĕçемĕн хĕссе пыраççĕ. Кенигсберг хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсене Гермау ятлă тĕреклетнĕ пункран хăваласа кăларнă. Ку ял Данциг бухти хĕрринчен 6 километрта ларать. Инстербург хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре пирĕн çарсем, тăшман хытă хирĕç тăнине çĕнтерсе, 10 километр малалла кайнă та Домнау хулине туртса илнĕ. Советсен Алле шывĕ тăрăх наступлени туса пыракан ытти чаçĕсем, танксемпе пехота çĕрле тунă атакăна пула, Гутштадт хулине туртса илнĕ. Кун каçиччен 4.000 гитлеровец ытла пĕтерсе тăкнă, 70 танкпа бронемашина тата бронетранспортер персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. 800 нимĕçе тытăкана илнĕ.

* * *

Шнайдемюль районĕнче пирĕн çарсем хулара хупăрласа илнĕ тăшман гарнизонне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Совет боецĕсем штурмлакан ушкăнсем туса çапăçса, нимĕçсене вăйлă çирĕплетнĕ позицисенчен хăваласа кăларнă. Гитлеровецсене пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă. 45 тупă, 1.000 винтовка ытла, хĕçпăшалпа çар пурлăхĕн темиçе складне тытса илнĕ. Тытăкана илнисем пур.

* * *

Одер çинчи Франкфурт хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата хĕвелтухăçнерехре пирĕн çарсем çапах наступлени туса пынă. Тăшман хăйĕн халран тухнă çарĕсене пĕрмаях çĕнĕ чаçсем хушса парса вăйлăлатса пырать. Юлашки кунсенче нимĕçсем çапăçăва темиçе дивизи тата темиçе вунă охраннăй, полицейски тата ытти батальонсене те кĕртсе янă. Гитлеровецсем хытă хирĕç тăраççĕ, анчах та совет çарĕсем пыра-пыра çапнипе, позици хыççăн позици хăварса, хĕвеланăçнелле чакаççĕ. Пĕр соединени боецĕсем пысăк вăрман витĕр тухнă та, малалла кайса, Зольдин хулине вăркăнса кĕрсе кайнă. Хаярран çапăçса, пирĕн чаçсем тăшман гарнизонне аркатса тăкнă та Зольдин хулине йышăннă. Паян пирĕн çарсем нимĕçсене çавăн пекех тата Дроссен хулинчен хăваласа кăларнă. Ку хула Одер çинчи Франкфурт хулинчен 22 километр çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре ларать. Çапăçу хирĕнче тăшманăн темиçе çĕр вилли выртса юлнă. Пирĕнисем трофейсем тытса илнĕ. Тытăкана илнисем пур.

* * *

Лешно (Лисса) хулинчен хĕвеланăçнерехре нимĕçсем пирĕн çарсене кӳлĕсемпе Фауле-Обра шывĕ тăрăхĕнче чарма хăтланнă. Пĕр соединени чаçĕсем тăшмăнăн çирĕплетнĕ районне çĕмĕрсе тăкнă, унтан, çав тери хăвăрт малалла кайса, Одео шывĕ çине тухнă. Тăшманăн пĕр-пĕринчен уйăрăлса кайнă отрячĕсене шыв хĕррине хĕстерсе лартнă та пĕтерсе тăкнă. Нимĕçсенчен 29 танкпа хăй тĕллĕн çӳрекен тулă, 30 бронетранспортер тата 35 тупă тытса илнĕ. 1.500 нимĕç салтакĕпе офицерне тытăкана илнĕ.

Совет летчикĕсем кун каçиччен сывлăшри çапăçусенче тăшманăн 16 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне, зенитнăй артиллери нимĕçсен 8 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Будапештра пирĕн çарсем хулан хĕвеланăç пайĕнче хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă. Гитлеровецсем хулари чул çуртсенчен нумай вăхăт хушши оборонăра тăма юрăхлă çӳтлĕхсем тунă, вĕсенче çирĕпленсе ларнă та пур еннелле те персе тăраççĕ. Штурмлакан совет ушкăнĕсем, артиллери пулăшнипе, тăшманăн тĕреклетнĕ пункчĕсене пусарса пыраççĕ, çине тăрсах малалла каяççĕ. Иванов старши лейтенантăн артиллерисчĕсем хăйсен тупписене пĕр пысăк çуртăн иккĕмĕшпе виççĕмĕш хутне алăпă йăтса хăпартнă та, çавăнтан тӳрĕ персе, тăшманăн хирĕç тăмалли узелне пĕтерсе лартнă. Гитлеровецсем пăтрашса кайнипе усă курса, пирĕн подразделенисем атака пуçласа янă, вара нимĕçсене темиçе квартăлтан хăваласа кăларнă, йĕри-тавра лайăх курса тăмалли позицине тытса илнĕ. Кошица офицерăн подразделенийĕнчи бронебойщиксем тăшман контратакине сирсе янă чухне нимĕçсен 3 танкне çунтарса янă. Тепĕр участокра пирĕн чаçсем тăшманăн икĕ батальонне аркатса тăкнă. Нимĕçсемпе венгерсен 478 салтакĕпе офицерне тытăкана илнĕ.

* * *

Хĕрлĕ Ялавлă Балтика флочĕн карапĕсем нимĕçсен пĕтĕмĕшпе 23 пин тонна тăракан икĕ транспортне шыва путарнă.

Ӳкерчĕк çинче: Пирĕн земляк отличник-артиллерист Х. Т. Гордеев юлташ. Отечественнăй вăрçа фрончĕсенче хастарлăн çапăçнăшăн ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

Çĕнтерӳ куйне çывхартас тесе

КАЛИНИНО (Телефонпа). Хĕрлĕ Çăран çĕнтерĕвĕсем колхозниксемпе колхозницăсене савăнтараççĕ, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тума хавхалантараççĕ. Çак кунсенче районри нумай колхозсенче пухусемпе митингсем пулса иртрĕç. Вĕсенче докладчиксем Хĕрлĕ Çăран çĕнтерĕвĕсем çинчен калаçа пачĕç.

Пушкин ячĕпе тăракан колхозри пухура парти членĕн кандидачĕ Коротков юлташ Хĕрлĕ Çар, хамăр Тăван çĕршыва тăшманран тасатнă хыççăн, тăшмана ют çĕршывсенче тата Германи территорийĕнче пăтăрăн аркатса пыни çинчен каласа пачĕ.

Пухура 66 çулхи колхозник И. Петриков юлташ сăмах тухса каларĕ:

— Пирĕн ывăлсен юнĕ, пирĕн куççуль сая каймарĕ, тăшман пирĕн хĕçпăшал вăйхăватне халĕ хăй çĕрĕ çинче тутанса пăхать. Эпĕ, Хĕрлĕ Çара мĕнле те пулин пулăшас тесе, кунĕн-çĕрĕн ĕçлерĕм, 400 ĕç-кунĕ турăм. Кăçал çуракине хатĕрленнĕ чух та пĕр ĕçрен те юлмăн тесе сăмах паратăп,—терĕ вăл.

Ун хыççăн Фекла Лимова юлташ сăмах тухса каларĕ. Вăл хăй мĕнле савăнни çинчен каласа пачĕ.

Колхозниксем çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе хастарлăнрах ĕçлеме йышăнчĕç. Çуракинче лаша питех те пысăк вырăн йышăннине шута илсе, колхозниксем лашасене канма хăвăртрах тăратас терĕç, çавăнпа вăрман касса турттарас ĕçе халех вĕçлессишĕн кĕрешме тытăнчĕç. Пуху иртнĕ хыççăнах вăрман хатĕрлесе турттарма çуран 20 çын, лашапа 8 çын туха кайрĕç. Колхозниксемпе пĕрле колхоз председателĕ Е. Виноградова тата колхозри икĕ бригадăн бригадирĕсем Кирилловăна Слонова юлташсем те пулаççĕ.

Р. ГРИГОРЬЕВА.

1944—1945 ÇУЛХИ КĔРКУННЕПЕ ХЕЛЛЕХИ ВАХАТРА ЧУГУН ÇУЛ ВАЛЛИ ВУТА ХАТĔРЛЕСЕ ТУРТТАРМАЛЛИ ПЛАНА 1945 ÇУЛХИ ФЕВРАЛĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ ЙЫШĂНА ЧУХЛĔ ТУЛТАРНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

Районсем тата вăрман хатĕрлекен организацисем	Плана тултарнă (процентпа)		Мĕнле вырăн йышăнать	
	Туртăрас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе	Туртăрас енĕпе	Хатĕрлес енĕпе
Первомайски	107,1	90,8	1	4
Куславкка	101,8	96,3	2	3
Сĕнтĕрвăрри	100,1	101,5	3	2
Чурачăк	93,2	77,8	4	7
Комсомольски	91,9	57,3	5	18
Çĕмĕрле	87,5	111,3	6	1
Вăрмар	79,2	48,7	7	25
Шăхасан	77,0	65,8	8	14
Чкаловски	75,6	70,0	9	10
Канаш	72,6	66,6	10	13
Октябрьски	71,0	71,4	11	9
Советски	71,0	62,8	12	17
Муркаш	70,8	63,5	13	16
Шупашкар	70,6	75,9	14	8
Йĕпреç	69,9	63,9	15	15
Ишлей	68,3	67,0	16	12
Хĕрлĕ Чутай	68,2	79,8	17	6
Елчĕк	62,6	52,4	18	24
Калинино	61,7	80,7	19	5
Кувакино	58,2	67,2	20	11
Етĕрне	56,2	63,9	21	22
Çĕрпӳ	55,5	52,5	22	23
Вăрнар	54,9	55,0	23	20
Элĕк	51,8	43,4	24	27
Сĕнтĕр	51,0	48,9	25	25
Красноармейски	45,9	56,5	26	19
Тăвай	45,9	54,1	27	21
* * *				
Улатăр вăрман хуçалăхĕ	113,2	102,4	1	1
Кире вăрман хуçалăхĕ	103,6	84,4	2	2
Йĕпреç вăрман хуçалăхĕ	93,2	77,8	3	4
Алтышево вăрман промхозĕ	87,0	60,2	4	12
Кире вăрман пункчĕ	84,5	84,4	5	3
Канаш вăрман промхозĕ	79,4	51,4	6	14
Çĕмĕрле вăрман хуçалăхĕ	70,9	63,2	7	9
Вăрнар вăрман хуçалăхĕ	67,0	65,8	8	7
Йĕпреç вăрман промхозĕ	63,7	63,0	9	10
Хĕрлĕ Чутай вăрман пункчĕ	62,8	65,7	10	8
Йĕпреç участокĕ	61,9	71,7	11	5
Çĕмĕрле вăрман пункчĕ	59,1	59,9	12	13
Вăрнар вăрман промхозĕ	58,9	70,8	13	6
Буинский вăрман промхозĕ	58,7	62,0	14	11

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Нумай ачалла амăшĕсене „Ача амăшĕн мухтавĕ" ятлă орденсемпе тата „Ача амăшĕсен медалĕ" ятлă медальсемпе наградăласси çинчен

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1944 çулхи августăн 18-мĕшĕнче йышăннă Указ тăрăх, СССР Верховный Совет Президиумĕн ячĕпе çаксене наградăлас:

Тăхăр ача çуратса пăхса ӳстерĕ амăшĕсене

«АЧА АМАШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛА I-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Ефросиния Ивановна **Толмачевăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кушник ял Советĕнчи «Волна» колхоз колхозницине.

Сакăр ача çуратса пăхса ӳстерĕ амăшĕсене

«АЧА АМАШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛА II-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Екатерина Сергеевна **Артомоновăна**—Куславкка районĕнчи Туканаш ял Советĕнчи «Ленинский призыв» колхоз колхозницине.

2. Рахима Кадировна **Ахмедзяновăна** — Куславкка районĕнчи Кармăш ял Советĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

3. Сара Газизовна **Гареевăна**—Куславкка районĕнчи Кармăш ял Советĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

4. Дария Александровна **Горбуновăна**—Шăмăршă районĕнчи Пуянкасси ял Советĕнчи «Знамя Октября» колхоз колхозницине.

5. Олимпиада Васильевна **Глуховăна** — Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

6. Ирина Ивановна **Ерасовăна**—Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

7. Матрена Матвеевна **Ильинана**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуркасси ял Советĕнчи Киров ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

8. Мария Матвеевна **Кочаковăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шулькăн ял Советĕнчи «Красноармеец» колхоз колхозницине.

9. Татьяна Николаевна **Никитинăна** — Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

10. Ксения Сергеевна **Павловăна**—Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

11. Муршида Гинятулловна **Сатрутдиновăна**—Куславкка районĕнчи Кармăш ял Советĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

12. Анна Григорьевна **Степановăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шулькăн ял Советĕнчи «Красноармеец» колхоз колхозницине.

13. Елена Исаковна **Степановăна**—Куславкка районĕнчи Мушар ял Советĕнчи «Заря» колхоз колхозницине.

Çичĕ ача çуратса пăхса ӳстерĕ амăшĕсене

«АЧА АМАШĔН МУХТАВĔ» ЯТЛА III-МĔШ СТЕПЕНЬ ОРДЕНПА

1. Екатерина Кузьминична **Александровăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кушник ял Советĕнчи «Волна» колхоз колхозницине.

2. Мария Мескурьевна **Анчуновăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Юртакасси ял Советĕнчи «Искра» колхоз колхозницине.

3. Наталия Григорьевна **Барановăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ваталей ял Советĕнчи Чапаев ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

4. Дария Федоровна **Васильевăна**—Куславкка районĕнчи Туканаш ял Советĕнчи «Канаш» колхоз колхозницине.

5. Ирина Ефимовна **Горбуновăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашне ял Советĕнчи «Правда» колхоз колхозницине.

6. Александра Ивановна **Громовăна** — Куславкка районĕнчи Курочкино ял Советĕнчи «Красный Волгарь» колхоз колхозницине.

7. Перасковья Петровна **Емельяновăна** —Куславкка районĕнчи Мушар ял Советĕнчи «Заря» колхоз колхозницине.

8. Анна Ивановна **Ивановăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Юртакасси ял Советĕнчи «Искра» колхоз колхозницине.

9. Евдокия Андреевна **Ивановăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашне ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз колхозницине.

10. Пелагея Ильиничча **Ильинана**—Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

11. Ксения Павловна **Красновăна**—Куславкка районĕнчи Мушар ял Советĕнчи «Спартак» колхоз колхозницине.

12. Антонина Федоровна **Михайловăна**—Сĕнтĕрвăрри хулинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

13. Екатерина Ивановна **Петикинăна** — Куславкка районĕнчи Мушар ял Советĕнчи «Заря» колхоз колхозницине.

14. Серафима Петровна **Потаповăна** — Куславкка районĕнчи Туканаш ял Советĕнчи «Ленинский призыв» колхоз колхозницине.

15. Татьяна Григорьевна **Потаповăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Турханкасси ял Советĕнчи «Верный путь» колхоз колхозницине.

16. Прасковья Сергеевна **Сергеевăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ультикасси ял Советĕнчи «Восток» колхоз колхозницине.

17. Клавдия Васильевна **Скворцовăна**—Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

18. Ольга Федоровна **Скворцовăна** —Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шулькăн ял Советĕнчи Буденный ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

19. Анна Петровна **Слепневăна**—Сĕнтĕрвăрри хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

20. Мария Тимофеевна **Тимофеевăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Ультикасси ял Советĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

21. Мария Игнатьевна **Трусеневăна** — Сĕнтĕрвăрри хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

22. Хозия Ханимзяновна **Шамсеевăна** — Куславкка районĕнчи Кармăш ял Советĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

23. Мария Федоровна **Юрновăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашне ял Советĕнчи «Наркомюст» колхоз колхозницине.

Ултă ача çуратса пăхса ӳстерĕ амăшĕсене

«АЧА АМАШĔСЕН МЕДАЛĔ» ЯТЛА I-МĔШ СТЕПЕНЬ МЕДАЛЬПЕ

1. Анна Васильевна **Барыкинăна**—Канаш хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

2. Анна Прокопьевна **Беловăна**—Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шуршăл ял Советĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

3. Мария Петровна **Даниловăна**—Куславкка районĕнчи Минкĕш ял Советĕнчи «Красноармеец» колхоз колхозницине.

4. Анастасия Алексеевна **Дубовăна** — Сĕнтĕрвăрри хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

5. Наталия Осиповна **Железковăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашне ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз колхозницине.

6. Наубагарь Хаюмовна **Зиганшинăна** — Куславкка районĕнчи Кармăш ял Советĕнчи Карл Маркс ячĕпе тăракан колхоз колхозницине.

7. Мария Александровна **Ивановăна** — Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Кукашне ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз колхозницине.

8. Мария Петровна **Кудановăна**—Сĕнтĕрвăрри хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

9. Мария Дмитриевна **Кудряшовăна** — Куславкка районĕнчи Мушар ял Советĕнчи «Спартак» колхоз колхозницине.

10. Клавдия Ивановна **Лебедевăна**—Сĕнтĕрвăрри хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

11. Анастасия Макаровна **Макаровăна**—Куславкка районĕнчи Туканаш ял Советĕнчи «Осоавиахим» колхоз колхозницине.

12. Татьяна Васильевна **Мартыновăна** — Сĕнтĕрвăрри хулинчи килхуçи хĕрарăмне.

13. Татьяна Николаевна **Михайловăна**—Шăмăршă районĕнчи Пуянкасси ял Советĕнчи «Заря» колхоз колхозницине.

14. Нина Васильевна **Муравьевăна**—Сĕнтĕрвăрри райсовет исполкомĕнчи служащие.

(Малалли пулать).

Ăмăртура мала тухассишĕн

ИШЛЕЙ. «Самолет» колхозра çитес çуракине хатĕрленес ĕç иртнĕ кĕркуннех пуçланнă. Кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ хыççăн эп

РЕСПУБЛИКАРИ КОЛХОЗСЕНЧЕ 1945 ҪУЛХИ ФЕВРАЛĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ ҪУРАКИНЕ ХАТĔРЛЕНЕС ЕҪ МĔНЛЕ ПЫНИНЕ КАТАРТАКАН СВОДКА

(процентпа)

РАЙОНСЕМ	Вăрлăх фондне кăмăл пĕрчĕллĕ тырăсене сортланă	Хĕле тислĕк кăларманлăх плана тултарнă.
Вăрнар	100.0	74.4
Муркаш	100.0	75.8
Сĕнтĕрвăрри	100.0	54,8
Шупашкар	100.0	43.7
Чурачăк	100.0	82.6
Шăхасан	100.0	66 2
Кушакино	100.0	30.7
Елчĕк	98.6	65.6
Комсомольски	98.3	24,5
Элĕк	95.5	36.9
Куславкка	94,7	52.0
Красноармейски	94,4	69.1
Октябрьски	94,1	74.9
Чкаловски	89.2	19.8
Çĕрпӳ	87.6	14.9
Канаш	87.1	77 6
Улатăр	87,0	34.6
Сĕнтĕр	84.4	59.5
Вăрмар	81.6	59.8
Çĕмĕрле	80.8	44.6
Пăрачкав	78,0	36,7
Первомайски	74,6	65,0
Йĕпреç	74,3	28.0
Тăвай	73,2	48,7
Шăмăршă	63,1	28.2
Советски	62,5	55,1
Ишлей	60,1	34,2
Калинино	41,0	31,3
Хĕрлĕ Чутай	37,6	49,7
Етĕрне	30,5	46,6
Пĕтĕмпе	83.4	50,6

* * *

Çуракине хатĕрленес ĕçре вăрлăх фондне хывасси тата вăрлăхсене тасатса акмалли кондицие лартасси чи пысăк ĕçсенчен пĕри пулса тăрать. Малта пыракан районсем вăрлăх фондне чи паха та таса тырăсем уйăрса хăвармалла. Вăрнар, Ишлей, Калинино, Октябрьски, Сĕнтĕр, Çĕрпӳ, Шупашкар тата ытти хăшпĕр районсем пĕрчĕллĕ тата пăрса йышши культурăсен вăрлăхĕсене çитĕлĕклĕ таран уйăрса хупă. Куславкка, Елчĕк, Шăхасан, Тăвай, Элĕк районĕсем вăрлăх фончĕсене 90—95 процент таран хывнă. Çав вăхăтрах вăрлăх фончĕсене хывасси уйрăм районсенче питĕ çитĕлĕксĕр пырать. Çĕмĕрле, Шăмăршă, Пăрачкав, Улатăр тата ытти хăшпĕр районсенче çак вăхăта çитсе те вăрлăх фончĕсене 65—75 процент таран кăна хывнă.

Муркаш, Советски тата ытти хăшпĕр районсем иртнĕ çул ялхуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă вĕçлерĕç, государство умĕнчи тивĕçĕсене вăхăтра парса татрĕç. Çавăнпа та ĕнтĕ çак районсем вăрлăх фондне хывас ĕçре юлса пынине ниепле те ăнланма çук.

Чылай районсенче курăк вăрлăхĕсене хатĕрлесси начар пырать. Республикипе паянхи кун тĕлне 1000 гектар çинчи клевер вăрлăхне çапса шĕкĕлчемелле. Ку ĕçе тăсса пынине малалла чăтма çук. Курăк вăрлăхĕсене хатĕрлес тĕлĕшпе çĕрĕ органĕсенче ĕçлекенсемпе колхоз руководителĕсен конкретлă мерăсем йышăнмалла.

Кашни колхозра вăрлăх фондне халех хывса çитермелле; вăрлăхсене тасатса хурас ĕçе пĕтĕм колхозниксемпе колхозницăсене мобилизацилемелле. Вăрлăхлăх тырă куç шăрçине сыхланă пек сыхламалла, хуралçăсем пулса ĕçлеме чи шанчăклă колхозниксене уйăрмалла.

Вăрлăхсене тасатса сортласси чылай районсенче юлса пырать. Ана паян пичетленекен сводкăран та лайăх курма пулать. Етĕрне, Калинино, Хĕрлĕ Чутай районĕсем çак вăхăта çитсе вăрлăхсене çурри те сортламан.

Вăрлăхсене вăхăтра сортламанни тырăн нумăрлăхне ӳстерет, çавăнпа пĕрлех пара вĕсен шăтас пахалăхĕ чакать. Çакна аспа тытса, вăрлăхсене тасатас ĕçе пикенерех тытăнмалла. Тырă тасатакан машинăсемпе туллин усă курмалла. Машинăсем çитмен колхозсенче çавра аласемпе алассине организацилемелле.

Ногинск районĕнчи колхозниксен примерĕпе

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ (ЧĂваш Кăмăлĕ корр.). Районри машинно-тракторлă станцин машинăсем валли чылай çулсем хушши сарайсем çителĕкпе таран пулман. Çавна пула комбайнсем, молотилкăсем колхозсенче урам варринче ларсах хĕл каçнă. Паллах, çавăн пек тытнипе машинăсем хăвăрт пăсăлаççĕ, час пĕтеççĕ.

Кăçал МТС валли сарай тăвас ыйтупа колхоз председателĕсен канашлăвĕ пулса иртрĕ. Канашлура ногинецсен пархатарлă примерĕ çинчен сӳтсе-явăрçç. Колхоз председателĕсем пурте ногинецсен пуçарăвне ырларĕç. Комбайнсемпе молотилкăсем валли халăх вăйĕпе пысăк сарай тума йышăнчĕç.

Халĕ сарай тăвас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Пĕтĕмĕшпе илсен, сарая туса çитернĕ теме те пулать. Сарай тунă çĕре стройматериалсем кӳрсе парас тĕлĕшпе «Победа», «Большевик», «Унгастрой», «Пахарь» тата Войков ячĕпе тăракан колхозсенчи колхозниксемпе колхозницăсем тăрăшса ĕçленĕ. Колхозсем тата МТС-ри трактористсем тинлĕн ĕçленипе çак сарая тумз 80 кубометра яхăн хăма тата ытти материалсем турттарнă.

Машинăсен сарайне тăвас ĕçе хăвăртлатас тесе, «Унгастрой» колхоз колхозникĕсем хăйсен колхозĕнчен хăма панă, платниксем парса пулăшнă. Платниксен бригадине Григорий Тихонов колхозник ертсе пырать.

Анчах, калас пулать, çак ĕçе хăшпĕр колхозсем, сăмахран, «Красная Горка», «Çĕнĕ ял» тата ытти колхозсем те хутшăнмарĕç.

С. ШАДИН.

Малта пыракансен опычĕпе паллаштарас майпа

Эпир пысăк тухăçлă вир мĕнле туса илтĕмĕр

1944 çулхи çуркунне ăçта мĕнле тырă акмаллине эпир хĕллех палăртса хутăмăр. Вир валли халиччен клевер йышăннă лаптăка уйăрса хăвартăмăр.

Вир—çумкурăкĕсенчен хăракан культура. Çавăнпа та çумкурăкне пĕтерес ыйтăва малти вырăна лартрăмăр.

Вир акмалли лаптăкăн виççĕмĕш пайне кĕрхи çĕртме туса хăварнă. Юлашки лаптăкне çуркунне трактортпа сухалармăр. Ун хыççăн пĕтĕм лаптăка 4—5 хут тимĕр сӳрепе сӳренĕ. Акас умĕн, çĕре çеммĕтес тата çумкурăксене пĕтерес майпа, «зигзаг» сӳресемпе тепĕр хут сӳрелерĕмĕр.

Вир—ăшша юратакан культура. Ана 10 сантиметр тарăнăшĕнче тăпра 13—14 градус ăшă вăхăтра çеç акмалла. Çавăнпа та эпир вире майăн 29-мĕшĕнче кăна акрăмăр.

Акасса сеялкăсемпе акнă. Сарлака ретле акас шутпа, малтан сеялкăсен сошникĕсене пĕрре урлă вĕçерсе илсе сайратса тухрăмăр. Шултăра сортлă вăрлăх тупăнманнипе, вырăнти вĕтĕ вăрлăхах акма тиврĕ. Çавăнпа та гектар пуçне 15 килограмм çеç кĕчĕ (15 гектара 195 килограмм).

Акнă вăхăтра çĕр нӳрĕ пулнă пирки вăрлăха 2—3 сантиметр тарăнăшне çеç вигсе хăварнă. Анчах часах çиллĕ уяр çанталăк çиелти тăпрана типĕтсе хытарса лартрĕ. Çакна пула вăрлăха шăтма тата çиеле тухма чарас хăрушлăх пулчĕ. Чкаласа шăхасан, çакă курăнчĕ: вăрă çурри сăмсаланнă, çурри çаплах выртать. Тăпран çиелти хытă сийне сӳрелесе ватма тиврĕ. Анчах сӳреленĕ хыççăн çиелерех хăпарнă сăмсаланнă вăрлăх типсе каять. Çитес кунсенче çĕмĕр пулмалли тĕслĕхсем пурине кура, эпир акнă хыççăн 8—9-мĕшĕнче çăмăл сӳресемпе пĕр хут сӳрелесе тухрăмăр. Тепĕр 2—3 кунтан чăнах та çăмăр çурĕ. Часах вирсем шăтса тухрĕç. Июнĕн 23-мĕш тĕлне шăтнă вир халичсен кассисем палăрчĕç, июлĕн пуçламăшне кăлча илемлĕн симĕслесе ларчĕ. Çав вăхăтрах вире пĕрремĕш хут çумкурăксенчен тасатса тухрăмăр. Июлĕн 4—10-мĕшĕсенче касăсен хушшине ăшăхăн сухаласа çемçетрĕмĕр. Ку ĕçе тума кашни бригада валли сухапуç евĕрлĕ пĕчĕк окучниксем ятарласах турăмăр. Ку окучникспа икĕ çын (пĕри туртса, тепри хыçалтан тытса) çăмăллăнах ĕçлерĕç. Икĕ çын пĕр окучникпа кунне пĕр гектар лаптăк çинчи йăрансене сухаласа пынă. Ун хыççăн тепĕр хут çумкурăксенчен тасатнă. Унтан иккĕмĕш хут йăрансене окучникпа тарăнлатса тухнă, тепĕр хут çумланă. Июлĕн 20-мĕшĕ тĕлне касăсен хушшисем те питĕрĕнчĕç. Вир хирĕ, хăмăш хирĕ пек, кашласа кайрĕ. Сентябрĕн 12-мĕшĕ тĕлне вир вырмалла та пулчĕ.

Вир лайăх пулса çитĕнчĕ. Еçлени сав каймарĕ. 12 гектар çинчен вăтам шутпа 20-шер центнер вир илтĕмĕр, хăшпĕр участоксем 30-шар центнер та пачĕç. Колхозниксене ĕçкунĕ тăрăх вир çеç 650-шар грамм валеçсе патăмăр. Стакан çурă «могар» вирне акса, 3 гектар акмалăх вăрлăх хатĕрлерĕмĕр.

Вир туса илес ĕçре пĕлтĕр çитменлĕхсем те пулнă: сортлă вăрлăхпа акман, акас умĕн тепĕр хут сухаласа е культиваци туса сӳремен, вăрлăха яровизацилесе акмач. Кăçал çак çитменлĕхсем пулас çук, çавăнпа та тата вăйлăрах вир туса илме ĕмĕтленетпĕр.

П. ИГНАТЬЕВ,
Первомайски районри Киров ячĕпе тăракан колхоз председателĕ.

Юр тытаççĕ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. Районри нумай колхозсем юр тытса хăварнин уссине ăнланаççĕ. Штанашри Буденный ячĕпе тăракан колхоз пурĕ 200 гектар çине юр тытса хăварчĕ. Ку колхоз ытти агротехникăллă мероприятисене те пурнăçласа пырать. Уйăхире 1.500 лав тислĕк кăларнă, 118 центнер кĕл, 46 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. Чкалов ячĕпе тăракан колхоз 42 гектар çине, Уйпуçĕнчи Энгельс ячĕпе тăракан колхоз 30 гектар çине юр тытса хăварнă. Юр тытса хăварас ĕç халĕ ытти колхозсенче те пулса пырать.

Шкул ачисем удобрени пухаççĕ

Хĕрлĕ Чутайри вăтам шкулта вĕренекенсем колхозсене удобрени пухса параççĕ. Вĕсем 63 центнер кĕл, 5 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухнă. 657 лав тислĕк хире кăларнă. Вĕренекенсем колхозсене çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе ытти ĕçсенче те пулăшаççĕ.

П. ТИХОНОВ.

Тĕрĕсленсе килнĕ заметкăсем тăрăх

„Колхозра мĕншĕн дисциплина çук“

Муркаш районĕнчен пирĕн редакцине çакăн пек ятлă заметка килнĕччĕ. Унта Шурча ялсоветĕнчи «Самолет» колхозра ĕç дисциплини япăххи çинчен, çавна пула колхозра ĕçсем юлса пыни, колхоз руководителĕсем çав çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе нимĕнле мера та йышăнманни çинчен çырнăччĕ.

Муркаш райĕçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Кошаков юлташ çырса пĕлтернĕ тăрăх, заметкăра çырнă фактсем пĕтĕмпех тĕрĕс пулнă. «Самолет» колхозăн председателĕ пулса ĕçленĕ К. Микушкин юлташа колхоз ĕçне япăхтарса янăшăн ĕçрен кăларнă.

Т. АНДРЕЕВА,
ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

КОМСОМОЛĂН ОТЧЕТПА СУЙЛАВ ПУХĂВĔСЕМ

Пур комсомолецсем те активлăн хутшăнчĕç

КУКЕҪ. Çак кунсенче комсомолăн Токликовăри пуçламăш организацийĕнче отчетпа суйлав пухăвĕ пулса иртрĕ. Комсомол комитечĕ пухăва иртнĕ малтанах лайăх хатĕрленнĕ. Пуху хăш вăхăтра тата ăçта пуласси çинчен пур комсомолецсене те вăхăтра пĕлтернĕ, пуху иртмелли çурта пĕркене кĕртнĕ. Çавăнпа пухăва пур комсомолецсем те вăхăтра пуçтарăнчĕç.

Комсомол организацийĕн ĕçĕсем çинчен комитет секретарĕ Е. Александров юлташ отчетлă доклад туса пачĕ.

Комсомолецсем колхоз ĕçĕсене хастарлăн хутшăнса ĕçлеççĕ. Вĕсем вăйлă тырпул туса илес тата общественнăлла выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçре ытти колхозниксене лайăх пример кăтартрĕç. Уйран тырпул пуçтарса кĕнĕ тата государствăна тырă панă вăхăтра комсомолецсем бригадирсем пулса кунĕн-çĕрĕн ĕçлерĕç. Колхозра 12 комсомолецран ятарласа транспорт бригади тунă. Çав бригада государствăна пурĕ 915 пат тĕштырă тата çĕрулмипе пахча-çимĕçсем 463 пат турттарса панă.

1945 çулта вăйлă тырпул туса илес тĕлĕшпе ĕçлеме ятарласа комсомолецсемпе çамрăксен звенине организацилеме. Çав звенори çамрăксем кăçал уя пĕтĕмпе 560 лав тислĕк кăларнă. Колхоз тимĕрçи комсомолец Е. Николаев юлташ ялхуçалăх машинисене юсавлă тытас тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлет. Вăл плугсемпе ытти машинăсене çуракине валли юсаса çитернĕ те ĕнтĕ.

Комсомолецсем хăйсен политикăллă пĕлĕвне ӳстерес тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлеççĕ. Вĕсем Сталин юлташăн историллĕ докладĕсемпе приказĕсене пĕрлешсе сӳтсеявăççĕ, вĕренеççĕ, колхозниксемпе колхозницăсене ăнлантарса параççĕ. Вулав çуртĕнчи библиотекăран илемлĕ литература кĕнекисене илсе, пĕрлешсе вулаççĕ, çав кĕнекесем тăрăх калаçусем ирттереççĕ. Комсомол енĕпе ирттерекен мероприятисене ялти çамрăксем активлăн хутшăнаççĕ. Кăçал колхоз çамрăкĕсен йĕлтĕрлĕ ăмăртăвне 15 комсомолец хутшăннă.

Колхозра агит-массăллă ĕçе туса пыракансене комсомолецсем хăйсем çине илчĕ. Александров, Григорьев, Николаев, Бельнова тата Васильева комсомолецсем агитаторсем пулса ĕçлеççĕ. Вĕсем тăрăшнипе колхозра стена хаçачĕсем, боевой листоксем йĕркеллĕ тухса тăраççĕ.

Комсомол организацийĕ уйрăмăнах ялти çамрăксем хушшинче лайăх ĕçлет. Кунта комсомолецсем тивĕçлипех колхоз çамрăкĕсен вожакĕсем пулса тăраççĕ. Çамрăксене комсомолецсен уçă пухăвĕсене аплан явăçтараççĕ, вĕсем хушшинче час-часах докладсемпе калаçусем ирттереççĕ. Çамрăксем хушшинче политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пынипе комсомол организацийĕ те нумай ӳсрĕ. Иртнĕ çулта 17 çамрăка комсомол ретне явăçтарнă.

Отчет тăрăх тухса калаçакансем комсомол комитечĕн ĕçĕнчи çитменлĕхсене те палăртрĕç. Комитет хăйĕн ĕçне планлăр туса пынă, çавна пула пухусем йĕркеллĕ пулса иртмен. Хĕрсем хушшинче ĕçлесси, вĕсене комсомол ретне ытларах явăçтарасси çителĕксĕр пулса пырать. Комсомолецсем, комитет ĕçне тĕплĕн тишкерсе тухса, çитменлĕхсене пĕтерме сĕнӳсем пачĕç.

Малтанах лайăх хатĕрленнине пула пуху аван иртрĕ. Пухăва пур комсомолецсем те активлăн хутшăнчĕç.

Т. АНДРЕЕВА,
ВЛКСМ Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

Англи парламенчĕн делегацийĕ Мускавран кайни

Енер, февралĕн 2-мĕшĕнче, Англи парламенчĕн делегацийĕ Мускавран тухса кайнă. Делегацире çаксем тăраççĕ: В. Эллиот —делегаци пуçлăхĕ, Н. Понсонби, М. Баллер, Д. Паркер, Т. Фрезер, лорд Фаринг-дон, У. Робертс, П. В. Джеусон тата С. Кинг-Холл господинсем. Англие тавраннă май делегаци Сталинградпа Баку хулисенче пулать. Бакуран пĕр ушкăне, В. Эллиот господин ертсе пынипе, Тегерана каять, тепĕр ушкăне Совет Союзĕпе паллашса çӳрет, ку ушкăн Узбек ССР-не тата Туркмен ССР-не кайса курать.

Вокзалта Англи парламенчĕн делегацине çаксем ăсатса янă: СССР Верховный Совет депутачĕсем В. А. Веснин тата В. А. Шадрин тата СССР Ют çĕршыв ĕçĕсен Халăх Комиссариачĕн ответлă сотрудникĕсем В. Я. Ерофеевпа П. А. Бушуев. Вокзала Великобританипе Совет Союзĕн флагĕсене çакса илемлетнĕ.

Британи парламенчĕн делегацийĕн пуçлăхĕ В. Эллиот господин калани

Мускавран тухса каяс умĕн Британи парламенчĕн делегацийĕн пуçлăхĕ Вальтер Эллиот господин совет пичечĕн представителĕсене çапла каланă:

«Мускавран каялла Лондона тухса каяс умĕн эпир, Британи парламенчĕн делегацийĕн членĕсем, пире кунта йышăнса хăналанине эпир питĕ ырласа хаклани çинчен пĕлтересшĕн. Пирĕн халăхсем малашнехи вăхăтра пĕр-пĕрне лайăх пĕлсе тăни питĕ кирлĕ пулнине эпир çав тери ĕненсе тăратпăр.

Совет Союзĕнчи индустрин пысăк предприятийĕсем çинчен, унăн çамрăк халăхĕ тăрăшни çинчен, хăйĕн руководителĕсене чунтан парăнса ĕçлени çинчен, пĕтĕмĕшле ӳсемшĕн пурте тăрăшни çинчен эпир Британире нумай илтнĕ, нумай вуланă пулин те, çаксене хамăр куçсемпе хурни пире чăннипех тĕлĕнтерчĕ.

Британире эпир çырас посланипе пурте интересленĕç. Вăл пирĕн икĕ халăх хушшинчи çыхăнăва çирĕплетĕ, вăрçă вăхăтĕнчи пекех, мирлĕ пурнăç вăхăтĕнче те пĕрлешсе ĕçлессинне вăйлăлатĕ».

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедицилле вăйĕсен çар командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре калана тăрăх, союзниксем Сен-Вит хулинчен 6 миля хĕвелтухăçнерехре лараканн Шонберг хулине туртса илнĕ. Союзниксен çарĕсем, çав хулăран хĕвелтухăçнелле 2 миля кусса, Бельгипе Германи хушшинчи чикĕ урлă каçса кайнă.

Çавăнтан кăнтăртарахра союзниксем Винтершейдран пĕр мильăра тăраççĕ. Союзниксем Ӳр шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре Эйгельшейд тата Гекхаленфельд хулисене йышăннă. Хаженау хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре, Рейн сывăхĕнче, 6 км хушши лапкă тăнă хыççăн союзниксем чăрсăм Сĕрçĕр Эльзас тӳремĕнче наступлени пуçласа янă, тăшман вăйлăн хирĕç тăнине курсе пăрахса, 2 миля малалла кайнă. Çав операцисене пула, Модер шывĕ урлă каçнă. Обергофенра хаяр çапăсусем пыраççĕ. Унтан кăнтăртарахра Гамбсхеймран сӳрçĕр. терехри вăрманлă вырăна тăшмăнтан тасатнă.

Страсбург хулинчен кăнтăртарахра союзниксен пехотипе бронетанковăй чăсĕсем Илль шывĕпе Рейн шывĕ хушшинчи районăн чылай пысăк пайне тăшмантан тасатнă. Кăлмартан сӳрçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем темиçе тĕлте Рейн патне тухнă. Кăлмар каналĕнчен кăнтăртарахра наступлени туса пырса, союзниксен çарĕсем 3 миля таран малалла кайнă.

Союзниксен ывăр бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, тăшманăн Германири паха чугун çул объекчĕсене тата çуллен центрĕсене вăйлăн тапăннă. Берлин çине те бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтăрĕр тинĕс таврашĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре калана тăрăх, Италире патрульсем кăна çапăçнă.

Берлинри лару-тăру

УЧРЕЖДЕНИСЕНЕ КУÇАРАС ЕҪ МАЛАЛЛА ПЫРАТЬ. ПОЛИЦИПЕ ХАЛĂХ ХУШШИНЧИ ХĔÇПĂШАЛЛА ТЫТАÇУСЕМ

ЛОНДОН, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Берлин учрежденийĕсем архивĕсене тата килти япаласене тиенĕ йышлă грузовиксем Мюнхен еннелле каяççĕ. Январĕн 27-мĕшĕнче правительство учрежденийĕсене Берлинран куçарма пуçласа, вăл ĕçе халь анлăн туса пыраççĕ. Мюнхенри бомбăсенчен упранса юлнă общественнăлла çуртсене, гостиницăсене тата уйрăм çынсен çурчĕсене тытса илнĕ.

Берлинра апат-çимĕç çитмен пирки кашни кунах тытăçусем пулса иртеççĕ. Хуларн хĕпăшаллă çынсем полицине тытăçатытăça илеççĕ. Çавăн пек пĕр тытăçу январĕн 28-мĕшĕнче рабочисем пурăнакан Нейкельн районĕнче пулса иртнĕ. Выçă халăх çăкăр ыйтса демонстраци тунă вăхăтра полици нумай çынна арестленĕ. Арестленĕ çынсене демонстрантсем ирĕке кăларма тытăнсан, полици халăха пеме пуçланă та 5 çынна вĕлернĕ. Вара халăх хушшинчен полицие пенĕ. 5 полицейскине вĕлернĕ.

Берлинри полици тата пĕр грузовик çĕрулми тытса илнĕ выçă çынсене пăшалпа пенĕ. Çавăнта 37 хĕрарăма вĕлернĕ. Январĕн 30-мĕшĕнче беженецсем, ăшăнас тесе, садри тенкелсене пухнă та кăвайт хунă. Вĕсем трамвайсене те ӳпĕнтере-ӳпĕнтере ярса çунтарнă. Ку хутĕнче полици ĕçе хутшăнман.

СТОКГОЛЬМ, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Германирен тавăнакан шведсем Германири хуласенче пуринче те хăраса ӳкни çинчен пĕлтереççĕ. Берлинран пынă çынсем пĕлтернĕ тăрăх, фолькштурм отрячĕсем халăхи вăхăтра Берлин хулин хĕвелтухăç пайĕнче çуртсене минăсем лартаççĕ. Берлин хулинчен ĕлĕкрех хĕвелтухăçнелле илсе кайнă ачасене халĕ Саксонине ăсатаççĕ. Берлин урамĕсене юртан тасатмаççĕ, автомашинăсем çӳремелле пĕрех. Трамвайсем аран-аран кăна çӳрекелеççĕ. Берлинра çăкăр тата çĕрулми çитменни питĕ палăрать. Апат-çимĕç çитменни кунран кунах ӳссе пырать.

«Свенска Дагбладет» хаçат çапла пĕлтерет: «Январĕн 31-мĕшĕнче Берлра Германири пысăк хуласенче шикленӳ ӳсни çинчен калакан хыпарсем илнĕ. Хĕвелтухăç Германире Дрезденпа Бреслау хушшинчи районри фолькштурм отрячĕсенче пăлхавсем пулнă. Гамбургра тата Бременра та хăраса ӳкнĕ. Çуртсем çине кашни çĕрех Гитлера хирĕçле листовкăсем сыпăçтарса хураççĕ».

БОЛГАРИРЕ ВĂРÇА ПРЕСТУПНИКЕСЕМ ПИРКИ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОР

СОФИЯ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Болгари халăх сучĕн пĕрремĕш составĕ регентсем, патша советникĕсем тата министрсем пулса ĕçленĕ çынсем пирки приговор йышăннă.

Суд регент пулса ĕçленĕ Кирилл Преславский князе, Богдан Филова, Никола Михова 5-шер миллион лев штраф тӳлеттерсе, пурлăхĕсене туртса илсе, хăйсене вĕлермелле тунă.

Министрсем пулса ĕçленĕ 22 çынна 5-шер миллион лев штраф тӳлеттерсе, пурлăхĕсене туртса илсе, вĕлермелле тунă. Вĕсем хушшинче: Добри Божилов, Иван Багрянов, Петр Габровский тата патша советникĕ пулса ĕçленĕ 8 çын.

Министр пулнă 4 çынна тата патша советникĕ пулнă 2 çынна 3-шер миллион лев штраф тӳлеттерсе, пĕтĕм пурлăхне тытса илсе, ĕмĕрех тĕрмере усрамалла тунă. Министр пулнă ытти 9 çынна пĕр султан пуçласа 15 çула çити тĕрмере усрама тата штраф тӳлеттерме йышăннă.

СОФИЯ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Софири радио пĕлтернĕ тăрăх, паян Болгари халăх сучĕн иккĕмĕш составĕ халăх пухăвĕн 25 созывĕн депутачĕсем пулнă çынсем пирки приговор йышăннă. 68 çынна 5-шер миллион лев штраф тӳлеттерме, пĕтĕм пурлăхĕсене туртса илме, хăйсене вĕлермелле йышăннă. Вăл шута Александр Цанков тата ытти çынсем те кĕреççĕ.

23 çынна 5-шер миллион лев штраф тӳлеттерме, пĕтĕм пурлăхĕсене тытса илме, ĕмĕрех тĕрмере тытса усрама йышăннă. Вĕсем хушшинче Петр Киоссейванов та пур.

16 çынна 3-шер миллион штраф тӳлеттерсе, пĕтĕм пурлăхĕсене тытса илсе, 15-шер çул тĕрмере усрамалла тунă.

Депутат пулнă 11 çынна тĕрлĕ вăхăт хушши тĕрмере усрамалла тата штраф тӳлеттермелле тунă.

СОФИЯ, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян София хулинче массăллă митинг пулса иртнĕ. Митингра 150.000 çын ытла пулнă. Митингра пулнисем хушшинче Болгарин вĕлернĕ партизанĕсен амăшĕсем, йăмăкĕсем тата ачисем пулнă. Тĕрлĕ партисен представителĕсем сăмахсем тухса калана. Болгарири вăрçă преступникĕсем пирки йышăннă приговора ырлакан резолюци йышăннă. Митингра пулнисем, пĕр шухăшлă пулса, халĕ пытанса пурăнакан преступниксене пурне те ответ тыттарма ыйтнă.

АМЕРИКАРИ 1.600 СВЯЩЕННИК ПИЧЕТЛЕСЕ КАЛАРНА ДЕКЛАРАЦИ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Католиксен чиркĕвне кĕмен духовенствăн 1.600 представителĕ Рузвельт, Черчилль тата Сталин ячĕпе декларацине пичетлесе кăларнă. Çав декларацире вĕсем Ватикан пĕтĕм тĕнчери ĕçсене хутшăннинне хирĕç калаççĕ. Декларацире çакна палăлă тунă: совесть ирĕклĕхĕ чиркĕве государствăран уйăрнă паха принцип çинче тытăнса тăрать, çавăнпа та тĕн органĕсен государство ĕçне хутшăнмалла мар, тенĕ.

Декларацире Римри папа тĕнче ĕçĕсене хутшăннине хытă критикленĕ. 1870 султач пуçласа Ватикан политика ĕçне хутшăнманччĕ; 1929 çултан пуçласа, фашизм вăйлансан, папа каллех тĕнчери ĕçсене хутшăнма пуçларĕ. «Ватикан,—тенĕ декларацире,—фашистла сĕршывсемпе туслă пулăнмалли договорсем турĕ. Папа Италире Муссолинине, Австрире—Дольфуспа Шушнига, Германире—Гитлера, Испанире — Франкона. Франципе—Петэна пулăшса пычĕ. Хальхи кĕрешӳре вăл демократи тăшманĕсен енче тăрать».

БЕЛЬГИ ПРАВИТЕЛЬСТВИ ВЫРАНТАН ТУХНĂ

ПАРИЖ, февралĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: Бельги премьер-министрĕ Пьерло паян Шарль принц-регента правительство вырантан тухасси çинчен заявлени панă.

ПОЛЬШАПА ЧЕХОСЛОВАКИ ХУШШИНЧИ СЫХАНУСЕМ

ЛЮБЛИН, январĕн 31-мĕшĕ. (ТАСС). «Польпресс» агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Польша республикин Мускаври посолĕ З. Модзельевский Чехословакин Мускаври посолĕнчен Эд. Фирлингертан çыру илнĕ. Вăл çырура калана тăрăх, Чехословаки правительстви Польша республикин Вăхăтлăх Правительствине йышăнать, унпа дипломатиллĕ сыхăну тытма пуçласшăн.

ЭАМ ДЕЛЕГАЦИНЕ АФИНЫ ХУЛИНЕ ПЫНА

ЛОНДОН, февралĕн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян Афины хулине Греци правительствин представителĕсемпе пĕрле пулмалли конференцине ЭАМ-ăн 3 делегачĕ пынă. Делегаци составне çаксем кĕреççĕ: ЭАМ Центральнăй Комитечĕн генеральнăй секретарĕ Парцалидес, коммунистсен партийĕн генеральнăй секретарĕ Сантос тата «Халăх демократчĕсен союзĕн» руководителе Цимикос.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Кĕçне сухалнă. Паллисем сакăн пек: 4 çулта, тĕсĕ турă, сăмси çинче шурă пăнă пур, çуни-мĕнĕпех сухалнă.

Пĕлекенсене çак адреспа пĕлтерме ыйтаççĕ: гор. Чебоксары, ул. Шевченко, 8, Усадский дом инвалидов.

РЕДАКЦИ АДРЕСЕ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительĕн секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типография № 1, Управления полиграфпро промышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Тираж 16.000 экз.

ЧТ 00019